• *Пулăм*

Анат Камăри чăвашлăх утравĕ

Анат Камăра чăваш гимназийĕ уçăлнăранпа вун пĕр çул çитрĕ. Тутарстанри урăх хулара кун пек вĕренӳ вучахĕ çук. Гимнази сумĕ ӳссех пыни республикăра кăна мар, ытти региона та паллă. Вăл ку таврари чăвашсен культура вучахĕ пулса тăни куç кĕрет.

Кунти чăвашсен культура çĕкленĕвĕ ЧОКЦ йĕркеленинчен пуçланнă. Иртнĕ ĕмĕрти тăхăр вуннăмĕш çулсенче Борис Никитин паллă композитор тăрăшнипе «Шăнкăрав» ансамбль хĕрӳллĕн ĕçлеме тытăннă. Сценăсем çинче те, радиопа та янăранă чăваш юррисем, ентешсене хавхалантарнă, илĕртнĕ, хумхантарнă. Ансамбль Тутарстанра пурăнакан чăвашсен ялĕсенче тата ытти региона, çав шутра Чăваш Республикинче те, пулнă. И.Я.Яковлев ячĕллĕ премие те тивĕçнĕ.

Пултаруллă педагог-пенсионерка Наталья Зотеева «Тамаша» чăваш театрĕ йĕркелес ĕçре ырми-канми ĕçленĕ. Театр та нумай çĕре çитнĕ. Ăна каярах халăх коллективĕн ятне панă. Наталья Александровна – Тутар Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Хулари 2-мĕш шкул директорĕ Николай Атряскин тăрăшнипе чăвашсен вырсарни шкулĕ уçăлнă. Вăлах çав вĕрентӳ вучахĕн директорĕ те пулчĕ. Пенсие тухсан та Николай Александрович ăна чылай çул ертсе пычĕ. Ансамбль ертӳçи Борис Никитин Чăваш тата Тутар республикисен культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн ятне илчĕ.

Ватăлăхпа пенсие тухнă хыççăн Николай Александрович хăй вырăнне пултаруллă педагога Анатолий Гаврилова хăварчĕ. Николай Атряскин – унтах методист. Вĕсем килĕштерсе ĕçлерĕç, чăваш ачисем валли гимнази уçма ĕмĕтленчĕç: çак ыйтупа Гаврилов Шупашкара та, Хусана та миçе кăна хутламан-ши? Вĕренӳ министерствисем гимнази уçас ĕçе хирĕç пулмарĕç. 1999 çулхи вĕренӳ çулĕ тĕлне вăл йĕркеленчĕ. Ăна уçнă çĕре Анат Кама пуçлăхĕсем, Тутар тата Чăваш республикисен Вĕренӳ министерствисен ертӳçисем, ЧОКЦăн районсенчи председателĕсем, ЧНК президенчĕ, хулари чăваш ачисен ашшĕ-амăшĕ пухăнчĕç.

Гимнази ĕçлеме тытăнни – чăваш ачисене хăйсен чĕлхине, культурине, халăх йăли-йĕркине вĕренме çул уçăлни. Вĕренекенсене шкула турттарма автобус та тупăнчĕ.

Ăнăçлă ĕçлет гимнази. Савăнма та, мухтанма та сăлтав çителĕклех. Ăна пĕтернĕ ачасем çулсеренех аслă шкулсене вĕренме кĕреççĕ. Диплом илнĕ хыççăн чăваш ятне çĕклесе тĕрлĕ вырăнта вăй хураççĕ. Вĕренме кĕнисенчен 65% – медицина факультетĕнче. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче халĕ 83 ача ăс пухать. Пурте тенĕ пекех – бюджет уйрăмĕсенче. Гимназие Чăваш патшалăх университечĕ нумай пулăшать. Унăн преподавателĕсем Анат Камăна килсех çӳреççĕ, консультацисем ирттереççĕ. Гимназипе университет пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлес тĕлĕшпе ректорта вăй хунă Лев Кураковăн тӳпи пысăк. Паянхи ректор Всеволод Агаков пулăшнине те палăртса хăвармалла. Кунта уçă уроксем час-часах иртеççĕ. Чăваш чĕлхин эрнисене, уйăхĕсене йĕркелесси йăлана кĕнĕ. Урок тулашĕнчи воспитани мероприятийĕсене яланах чăвашла ирттереççĕ.

■ **Виктор СИМАКОВ**